28-мĕш çул тухать. Ханĕ 20 пус.

1945
НОЯБРЬ
28
ЮНКУН
231 (6982) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлашăр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

ФИНПЛАНА ПУР ТӲЛЕВСЕМ ТĂРĂХ ТА ТУЛТАРАР

Халăх хуçалăхне аталантарса пырас ĕçре укçа-тенкĕ яланах пысăк вырăн йышăнса тăнă. Халĕ, çĕршыв мирлĕ пурнăç тапхăрне куçнă хыççăн, промышленноçпа транспорта тата социализмлă ялхуçалăхне çĕнĕлле ĕçлеттерме тытăннă чухне, укçа-тенкĕ вырăнĕ татах та пысăкланчĕ. Çавăнпа та пирĕн финанс работникĕсем умĕнче питех те пысăк задачăсем тăраççĕ. Вĕсем социализмлă бюджетăн пур мероприятийĕсене те укçа-тенкĕ çителĕклĕ таран парса тăма тивĕçлĕ. Финанс органĕсем тĕрĕс ĕçлепи, вĕсем çĕршыва укçа-тенкĕ нумайрах пани пирĕн халăх хуçалăхне вăйлăрах ataланма май парать, çĕршыв умĕнче тăракан çĕнĕ задачăсене хăвăртрах татса пама пулăшать.

Чăваш республикинчи финанс органĕсенчен пумайĕмĕ хăйсен задачисене чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Финанс работникĕсен Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăвне пуçирса яракансем—Çĕрпӳпе Сĕнтĕрвăрри районĕсем укçа-тенкĕ пухмалли плана кварталтан квартала срокчен тултарса пыраççĕ.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртура лайăх ĕçленипе Çĕрпӳ, Сĕнтĕрвăрри, Красноармейски, Елчĕк, Вăрнар тата Чурачăк районĕсенчи финанс пайĕсем премисем илме тивĕçлĕ пулчĕç. Хăйсен çитĕнĕвĕсемпе лăпланса лармасăр, ку районсем халĕ те ĕç хăвăртлăхне чакармаççĕ. Вĕсем IV-мĕш кварталти финанс планне сывăх кунсенчех тултарĕç. Ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне Çĕрпӳ районĕ укçа-тенкĕ пухмалли IV-мĕш квартал планне 86,9 процент, Сĕнтĕрвăрри районĕ 77,2 процент тултарнă.

Анчах тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармалăрмарăм кирлĕ мар, мĕншĕн тесен финанс органĕсен туса çитермен ĕçĕсем халĕ сахал мар-ха. Юлашки кварталăн пĕтиччен уйăх ытларах кăна юлчĕ. Унччен кăçалхи финанс планне пур тӳлевсем енĕпе те пĕтĕмĕшпех тултарса, çĕнĕ çула пĕр парăмсăр пырса кĕрес пулать. Çакăн пек тăвас пулсан, финанс работникĕсен пĕтĕм тимлĕхне ĕçлени, юлнă вăхăтпа пĕлсе усă курни, партипе совет организацийĕсен финанс органĕсене тăтăмах пулăшса тăни кирлĕ. Анчах та хăшпĕр районсенче юлашки вăхăтра укçа-тенкĕ пухас ĕçе вăйлатас вырăнне сӳрĕклетни палăрать. Ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне Хĕрлĕ Чутай, Кувакино, Çĕмĕрле, Шăмăршă, Пăрачкав, Комсомольски тата ытти хăшпĕр районсем IV-мĕш кварталти финанс планне 40 процентран та каярах тултарнă. Хĕрлĕ Чутайпа Пăрачкав районĕсем уйрăмах ялхуçалăх налогĕ пухас тĕлĕшпе юлса пыраççĕ. Ноябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне Хĕрлĕ Чутай районĕ ялхуçалăх налогĕ пухас тĕлĕшпе плана 16,6 процент, Пăрачкав районĕ 27,4 процент çеç тултарнă. Асăннă районсенчи финанс пайĕсемпе перекет кассисен заведующийĕсем укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе кашни кун тимлĕн ĕçлес вырăнне ĕç хăй тĕллĕн пуласса шанса лараççĕ, налог инспекторĕсемпе аппаратчĕсен ĕçне тĕрĕслесе тăмаççĕ. Çавăн пекех вăл районсенче ĕççыннисем хушшинчи массăллă ăнлантару ĕçне те анлăн туса пымаççĕ.

1945 çулхи IV-мĕш кварталти финанс планне пур тӳлевсем тăрăх та тултарса çитерес, парти, совет тата финанс органĕсене ку тĕлĕшпе лайăхрах ĕçлемелле тăвас тесе, ВКП(б) Обкомĕ кăçалхи ноябрĕн 25-мĕшĕпе декабрĕн 25-мĕшĕ хушшинче финанс планне тултармалли уйăхлăх тума йышăннă. Вăрнар районĕнчи финанс работникĕсем уйăхлăха республикăра чи малтан хутшăнса, татăклă обязательствăсем илнĕç, 1945 çулхи IV-мĕш кварталти финанс планне срокчен тултарма республикăри пур финанс работникĕсене те чĕнсе каларĕç.

Çак уйăхлăх финанс планне тултарса ситермелли татăклă тапхăр пулса тăрать. Çак уйăхлăхра финанс планне пур тӳлевсем тăрăх та тултармалла. Çавăнпа та парти, совет тата финанс органĕсен çак вăхăтра нихăçанхинчен те лайăхрах ĕçлес пулать.

Агитаторсемпе вулавçăсен СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленес ĕçсене укçа-тенкĕ пухас задачăсемпе сыхăнтарса туса пымалла. Уйрăмах кунта тӳлевсем тĕлĕшпе юлса пыракансем хушшинче ытларах ĕçлени кирлĕ. Уйăхлăха ăнăçлăн пуçтерни çĕршывăн укçа-тенкĕ фондне татах та ӳстерĕ.

Укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе ĕçленĕ май ĕçсыннисене хăйсен укçа-тенкине перекет кассине хывтарас, вкладчиксен йышне ӳстерес тĕлĕшпе те тимлĕн ĕçлемелле. Перекет кассисен государство заемĕсен вылявĕсене палăртса, выигрышсене вăхăтра тӳлесе тăмалла. Çакă вăл заем укçине пухас ĕçре паллă вырăн йышăнса тăрать.

Çавăнпа пĕрлех хуçалăхри пурлăха, пурнăçа тата ытти сене те ирĕклĕн страхлас ĕç çине те тарăнрах пăхмалла.

Умра — çĕнĕ, 1946 çул. Çĕршыври ĕççыннисем çĕнĕ çула производствăра çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Финанс работникĕсен те çак ответлă та татăклă тапхăрта кашни район, колхоз тата хуçалăх 1945 çулхи IV-мĕш кварталти финанс планне пур тӳлевсем тăрăх та пĕтĕмĕшпех тултартăр. Çакă вăл финанс работникĕсен çĕнĕ çул парни пулĕ.

Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен РСФСР-ти суйлав комиссийĕ пĕлтерни

Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен РСФСР-ти суйлав комиссийĕн адресĕ çапла: гор. Москва, Делегатская улица, № 3, телефон К. 5—43—22.

Совет Союзĕпе Польша хушшинче тӳррĕнех чугун çул çыхăнăвĕ тăвасси çинчен

Мускавра пулса иртнĕ калаçусем хыççăн, 1945 çулхи ноябрĕн 23-мĕшĕнче ССР Союзĕн Çулйĕр Халăх Комиссариачĕпе Польша Республикин Çулйĕр Министерстви Совет Союзĕпе Польша хушшинчи тӳррĕмĕнех чугун çул çыхăнăвĕ тăвасси çинчен килĕшӳ туса алă пуснă.

Килĕшӳре таварсем турттарасси çинчен, тарифсем çинчен, вагонсемпе усă курасси çинчен, расчетсем çинчен, турттаракан япаласене упрасси çинчен, Германири Совет Союзĕ оккупацилеме вăйăпа Совет Союзĕ хушшинче поляксен чугун çулĕсем тăрăх тӳррĕнех таварсем турттарасси çинчен калана.

Килĕшӳ çине çаксем алă пуснă: СССР Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ ячĕпе — Халăх Комиссарĕн Заместителĕ Бешов юлташ тата НКПС-ăн ют çĕршывсемпе çыхăнмалли отдел начальникĕ Низовцев юлташ; Польша Республикин Çулйĕр Министерстви ячĕпе—Çулйĕр Министерствин вице-министрĕ Олевинский господин тата коммерципе тариф департаменчĕн директорĕ Вышковский господин.

(ТАСС).

ПРОФСОЮЗСЕН ОРГАНИЗАЦИЙĔСЕМ ÇАР ÇЫННИСЕН ÇЕМЬИСЕНЕ ПУЛĂШНИ

ВЦСПС секретариачĕ йывăр машиностроени предприятийĕсенче çар çыннисен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе профсоюз организацийĕсем мĕн тунине пăхса тухнă. Йышăннă постановление çакна кăтартса панă: Хĕрлĕ Çар воинĕсен çемьисене апат-çимĕç, промышленность таварĕсем тата ытти те парса пулăшаççĕ. Вĕсен хваттер условийĕсене лайăхлатаççĕ: хваттерсене юсаççĕ, вутă турттарса параççĕ, сĕтел-пукан уйăрса параççĕ. Çар çыннисен çемьисене пахчасем валли чи лайăх çĕрсем уйăрса панă, вĕсене вăрлăх панă, çĕре сухалама тата çитĕннĕ пахчаçимĕççене пухса илме чылай пулăшнă. Çар çыннисен темиçе пин ачи çуллахи вăхăтра пионер лагерĕсенче тата сыватмалли площадкăсенче каннă.

Анчах çак ĕçре пысăк çитменлĕхсем те пур-ха. Уйрăм предприятисенче çар çыннисен пур çемьисене те шута илмен, завкомсем Хĕрлĕ Çар воинĕсен çемьисен членĕсене тата Отечественнăй вăрçă инваличĕсене ĕçе вырнаçтарас тĕлĕшпе тата вĕсен производствăлă квалификацине хăпартас тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлемеççĕ.

ВЦСПС секретариачĕ тăлăх ачасене пурне те шута илме хушнă, вĕсене ача çурчĕсене вырнаçтарма тата пăхса ӳстермешкĕн рабочисемпе служащисен çемьисене пама (усрава илес йĕркепе пама) хушнă. Шкул ачисене шкул тулашĕнче воспитани пама тата вĕсем валли культурăллă-массăллă ĕçсем тумашкăн клубсенче, культура дворецĕсенче тата рабочи поселокĕсенче ача пӳлĕмĕсем тумалла.

ВЦСПС секретариачĕн постановленийĕнче тата çапла каланă: декабрĕн 15-мĕшĕччен çар çыннисен çемьисен ĕçлеме пултаракан мĕнпур членĕсене шута илмелле, вĕсене ĕçе кĕме тата хăйсен производствăлă квалификацине ӳстерме пулăшмалла. Профсоюз организацийĕсен, предприятисен руководителĕсемпе пĕрле ĕçлесе, Отечественнăй вăрçă инваличĕсен тата Хĕрлĕ Çар воинĕсен çемьисен членĕсен квалификацине хăпартмашкăн вĕсене вĕренмелли плансем сырса хатĕрлемелле. (ТАСС).

ВЦСПС-пр СССР СЫХĂНУ ХАЛĂХ КОМИССАРИАТĔНЧЕ

ВЦСПС-па СССР Сыхăну Халăх Комиссариачĕ октябрь уйăхĕнче Шупашкарти линейно-технически узел (начальникĕ Панов юлташ, парторганизаци секретарĕ Красильников юлташ, профоргĕ Никитина юлташ) лайăх ĕçленине палăртнă, ăмăртура мала тухнă работниксене премилеме укçа уйăрса памалла тунă.

СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленеççĕ

СОВЕТСКОЕ. Районри нумай колхозсенче комсомолецсемпе çамрăксем «СССР Верховный Советне суйламалли Положение» тĕплĕн вĕренеççĕ. Ку тĕлĕшпе колхозсенче ятарласа кружоксем организацилеме. Акă, «Ырăш» колхоз çумĕнчи комсомол организацийĕнче 17 комсомолец. Вĕсем суйлав законне тата СССР Сталинла Конституцине кружокра тĕплĕн вĕренчĕç. Кружок занятийĕсене союзра тăван çамрăксем те нумай çӳрерĕç. Халĕ комсомолецсем хăйсем агитаторсем пулса ĕçлеççĕ. Кашни комсомолец 5 кил çирĕплетсе пана. Комсомолец-агитаторсем хăйсене çирĕплетсе пана килсенчи суйлавçăсене эрнере икĕ хутчен пухса суйлав Положенине вĕрентеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем суйлав законне пысăк хаваслăхпа вĕренеççĕ, агитаторсене нумай ыйтусем парса ыйтса пĕлеççĕ.

Район центрĕнчи учрежденисенче ĕçлекен комсомолецсемпе çамрăксем те суйлав Положенине СССР Конституцине кружоксенче вĕренеççĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах сыхăну конторинче ĕçлекен комсомолецсен кружокĕ лайăх ĕçлет. Кунта кружок занятийĕсем эрнере икĕ хутчен пулса иртеççĕ. Занятисенче суйлав çинчен хăçатсенче пичетленсе тухнă статьясемпе те анлăн усă кураççĕ.

В. ФЕДОРОВА,
ВЛКСМ райком секретарĕ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Упи ял Советне икĕ колхоз кĕрет. Çак икĕ колхоза агитколлективсене ĕçлеме виçĕ участока уйăрнă, кашни участокра виçшер агитатор. Кашни агитатора 10—20 кил çирĕплетсе панă. Халĕ агитаторсем колхозниксем патне килĕрен çӳресе тата пĕр çĕре пухса суйлав Положенине ăнлантараççĕ. Чи лайăх ĕçлекен агитаторсенчен А. Николаев коммуниста палăртмалла. Вăл занятисене вăхăтра ирттерет тата каласусене хуçалăх ыйтăвĕсемпе пĕлсе сыхăнтарса пырать. Çапла вара унăн участокĕнчи колхозниксем колхоз ĕçĕнче те, государство умĕнчи парăмсене татас тĕлĕшпе те малта пыраççĕ. «Коминтерн» колхоз аван çапса пĕтернĕ, государство умĕнчи пур тĕрлĕ парăмсене те парса татнă.

«Янмурзино» колхозри С. Ильин, Г. Александров, И. Тимофеев агитаторсем те суйлав Положенине ăнлантарас тĕлĕшпе начар мар ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсене çирĕплетсе пана участокри колхозниксем патĕнче кашни кунах пулса суйлав законĕ çинчен калаçусем ирттереççĕ. Суйлав Положенине вĕренме тытăннăранпа Т. Ефимов, Н. Яковлев, Л. Петров тата ытти колхозниксем те государство умĕнчи пур парăмсене те парса татрĕç. Ял Совечĕ укçа-тенкĕ пухмалли IV-мĕш квартал планне 60 процент ытла тултарнă.

Лайăх ĕçлекен агитколлективсем районра татах та пур. Албахтинăри агитколлектив (руководителĕ М. Петров юлташ) суйлав Положенине ăнлантарас тĕлĕшпе аван ĕçлет. Кунта кашни учителе, коммуниста, комсомолеца уйрăм участоксем çирĕплетсе пана. «Большевик» крахмал заводĕнче ĕçлекенсем те суйлав Положенийĕпе СССР Конституцине уйрăм кружокра вĕренеççĕ.

Суйлав законне вĕренме районра пурĕ 40 кружок ытла организацилеме.

С. ШАДИН.

Тракторсем юсамалли кварталти плана тултарнă

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). МТС коллективĕ ноябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне 15 трактор юсаса, тракторсем юсамалли IV-мĕш кварталти плана тултарчĕ. Паян 16-мĕш трактора юсасă пĕтереççĕ. Юсанă тракторсене йышăнакан комисси тракторсене лайăх юсанă тесе йышăннă.

МТС-ра чăн малтан Екатерина Иванова ертсе пыракан 9-мĕш трактор бригади мала тухнă. Вăл хăйĕн бригадинчи тракторсене ытти бригадăсенчен маларах юсаса пĕтернĕ. Иванова бригади хыççăн Егоров юлташăн бригади пырать. Ку бригада тракторсене графикпа пăхнинчен икĕ кун маларах юсаса пĕтернĕ. И. Титов, В. Виноградов, Е. Порфирьев, С. Иванова, Н. Кириллов тата ытти трактористсем ирхине 8 сехетрен пуçласа сӳрĕр иртсен пĕр сехетчен мастерскойран тухмасăр ĕçленĕ. Мастерской заведующийĕ А. Павлов юлташ тракторсем юсас ĕçре мĕн кирлине пурне те вăхăтра хатĕрлесе тăнă. Старши механик Афанасьев юлташ кашни тракториста ĕçре пысăк пулăшу панă, хăй те ывăнма пĕлмесĕр ĕçленĕ. МТС директорĕ орденоносец А. Константинов юлташ тата пуçламăш парторганизацин секретарĕн ĕçне вăхăтлăха туса пыракан М. Николаева юлташ тракторсене юсас ĕçе лайăхрах организацилессишĕн, социализмлă ăмăртăва анлăрах сарассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçленĕ.

Красноармейски МТС коллективĕ, СССР Верховный Советĕн суйлавĕ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, декабрĕн 25-мĕшĕ тĕлне МТС-ри мĕнпур тракторсене юсаса пĕтерме обязательство илчĕ. Çак обязательствăна пурнăçласси-шĕн кунта халь вăйлă кĕрешеççĕ.

ТС колхозсене сителĕклĕ пулăшмасть

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Район государствăна тырă парас тĕлĕшпе çапларах юлса пырать. Нумай колхозсем государство умĕнче пысăк парăмлă. «Красный маяк» колхозăн государствăна 478 центнер тырă памалла пулсан, пурĕ те 85 центнер çеç панă. Çавăн пекех «Красная Чувашия», «Профинтерн», «Прогресс», Киров ячĕпе тăракан колхозсем те государствăна тырă памалли плана 50 процентран та сахалтарах тултарнă.

Государствăна тырă памалли плана питĕ майĕпен тултарса пыни аван çапассине начар организацилениичен килет. Колхозсене аван çапас ĕçре МТС та çителĕклĕ пулăшмасть. МТС молотилкисемпе стационарта ларакан комбайнсем тепĕр чухне ĕрнешер ĕçлемесĕр лараççĕ.

— Машинăсем ĕçлемесĕр ларнăшăн эпир айăплă мар. Пирĕн запасной пайсем çук,—тесçĕ çăмăллăн МТС работникĕсем. Çав хушăрах кăшт çеç юсамаллине те вăхăтра юсама тăрăшмаççĕ. Куçса сӳрекен ремонт мастерскойĕ çук пирки, пĕчĕк пай çĕмĕрĕлсен те МТС-а каймалла пулать.

МТС директорĕшĕн Г. Михеев юлташăн молотилкăсемпе комбайнсем чылай чухне ĕçлемесĕр ларни ним те мар иккен. «Победа» колхозра пĕр сложнăй молотилка икĕ уйăх ытла ĕнтĕ ĕçлемесĕр ларать. Кун пек ĕçлемесĕр ларакан молотилкăсемпе комбайнсем ытти колхозсенче те пур. Çапах та МТС директорĕ вĕсене вăхăтра юсаса ĕçе яма тăрăшмасть.

МТС молотилкисемпе комбайнĕсем колхозсене сахал пулăшнине çак тĕслĕхсем те лайăх çирĕплетсе параççĕ: МТС ĕçлекен колхозсенчен пĕри те паянхи куна аван çапса пĕтермен, государствăна тырă парса татман. Çапах та район руководителĕсене çак тĕслĕх сахал пăшăрхантарать.

МТС аван çапмалли плана вăрахăн тултарса пырать. Паянхи куна 550 тонна кăна çаннă.

Аван çапас ĕçе хăвăртлатас тĕлĕшпе халех тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла. МТС дирекцийĕн ĕçне ВКП(б) райкомĕпе райисполкомĕн куллен хутшăнса ертсе пымалла.

П. ТИХОНОВ.

Суракине хатĕрленеççĕ

КАЛИНИНО. (Телефонпа, хамăр корр.). Уйкас Юнтапари «Çĕнĕ Пурнăç» колхоз государство умĕнчи хăйĕн обязательствине срокчен пурнăçланă, планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă тата çĕрулми те нумай панă. Колхоз вăрлăх участокĕнчен пухса илнĕ тырра вăрлăх валли тасатса уйрăм амбарсене хунă.

Колхоз çитес суракине те хатĕрленме тытăннă. План тăрăх суракинче ĕçлеме икĕ касăллă плугсем 12, пĕр кассăллă плугсем 6 кирлĕ пулаççĕ. Колхоз тимĕрçи 64 çулхи Николай Никифоров тата унпа ĕçлекен В. Исаков юлташсем плугсене юсама кĕркунненех тытăннă. Паянхи кун тĕлне икĕ касăллă 15 плуг тата пĕр касăллă 15 плуг, тимĕр шăллă 6 сӳре, 1 сеялка юсаса хунă. Халĕ килейкăсене юсама тытăннă.

— Ваттисем сунана çулла, урапана хĕлле хатĕрле, тенĕ, çавăнпа та суракинче кирлĕ хатĕрсене эпир халех юсаса пĕтертĕмĕр,—тет ватă тимĕрçĕ Никифоров юлташ.

Е. ВОЛКОВ.

ĂМĂРТУРА МАЛА ТУХРĔ

МУРКАШ. «Авангард» колхоз кăçалхи уйăхри ĕçне вăхăтра тата ăнăçлăн вĕçлерĕ. Государствăна тырă памалли плана срокра тултарчĕ, планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 600 пат тырă панчĕ. Паянхи куна колхоз государство умĕнче пăрăмлă мар. Çĕрулмипе пахчаçимĕç, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плансене те тултарнă. Колхоз ĕçне лайăхлатса пырас тĕлĕшпе колхоз председателĕ коммунист Я. Кольцов пĕтĕм вăйне хурса ĕçлет. Вăл тăрăшса ĕçленипе пула тата колхозниксене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарнипе, пур ĕçсем те лайăх пулса пыраççĕ. Иртнĕ çулсенче «Авангард» колхоз юлса пынă пулсан, Я. Кольцов юлташ ĕçлеме пуçланăранпа ĕçсем лайăхланса пычĕç.

«Авангард» колхоз юнашарти «Свобода» колхозпа ăмăртать. Ăмăртура «Авангард» колхоз мала тухрĕ.

«Авангард» колхоз çак кунсенчех аван çапса пĕтерет.

Г. СКВОРЦОВ,
Ял Совет председателĕ.

Инвалидсемшĕн лайăх тăрăшать

Вунпилĕк çул ытла ĕнтĕ Александра Димитриевна Капустина юлташ Обеспечени халăх комиссариачĕн системинче ĕçлет.

1928 çулта вăл Шупашкара, Кооперативсоюз правленине уборщица пулса ĕçлеме кĕрет. Ĕçчен çын пулса, хăйне хушнă ĕçе вăл лайăх та йĕркеллĕ туса пынă, пушă вăхăтсенче кĕнеке-хаçатсем вуласа вĕренме тăрăшнă. Вĕренсе ӳссе пынине кура ăна кооперативсоюз кассин пуçлăхĕ туса хунă. Çакăнтан ĕнтĕ унăн ӳсĕм çулĕ пуçланнă.

1941 çулта, Отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа, Капустина юлташа Обеспечени халăх комиссариачĕ колхозсенчи пулăшу кассисен пайĕн заведующийĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартать. Вăл тăрăшса ĕçленипе чылай пулăшу кассисен ĕçĕсене чĕртсе янă, чылай районсенче çĕнĕрен кассăсем организацилеме.

Отечественнăй вăрçăран инвалидсем таврăнма пуçланă май Обеспечени халăх комиссариачĕ инвалидсен çурчĕсене уçма тытăнать. Çак ĕçе ертсе пыма Капустина юлташа хушаççĕ. Александра Димитриевна хăйне хушнă ĕçе пурнăçа кĕртессишĕн чун-чĕререн тăрăшать. Вăл кĕске вăхăтрах Кувакинăра инвалидсем валли пурăнма ăшă та çутă çурт уçать, вăрçăран суранланса килнĕ çынсемпе тăван амăшĕ пек ăшшăн калаçать.

Шупашкар хула Совечĕ çумĕнчи гособеспечени пайĕн ĕçĕ сарăлса пынине пула, унта Капустина юлташа ĕçлеме яраççĕ. Ку ĕçре те Александра Димитриевна хăйĕн пултарулăхне кăтартса парать. Вăл инвалидсен личнăй карточкисене йĕркелет, хăш инвалид ăста, мĕнле ĕçре пулнисене палăртать, хăш инвалида епле пулăшу кирлине паллă туса хурать, инвалидсен пурнăç условийĕсене пĕлме килсем тăрăх çӳрет. Çапла вырăна тухса пĕлнĕ хыççăн инвалидсен хваттерĕсене юсама, вутă турттарса пама пулăшнă.

Нумаях пулмасть вăл 15 инвалидăн пурнăç условийĕсене пăхса тĕрĕслесе тухнă, тивĕçлĕ пулăшу панă. Отечественнăй вăрçă инвалидне Латунин юлташа, хватерне кайса тĕрĕсленĕ хыççăн вутă, кирпĕч турттарса панă, урине тăхăнма çамата, 10 метр пир панă.

Хальхи вăхăтра Отечественнăй вăрçă инваличĕсене тĕрлĕ пулăшу парасси кунран кунах лайăхланса пырать. Ноябрь уйăхĕнче кăна Шупашкарти инвалидсене 4.100 метр пир, 220 мăшăр çамата тата ытти япаласем те панă.

Тăван çĕршыва хӳтĕлесе инвалид пулса юлнă çынсем çакăншăн партипе правительствăна чĕререн тав тăваççĕ.

Валентин УРДАШ.

Тăлăх ачасемпе фронтра вилнĕ çынсен çемьисене кулленех пулăшмалла

Шăхасан районĕнчи Сурăм ял Советĕнчи тăлăх ачасемпе фронтра вилнĕ çынсен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе чылай пысăк ĕçсем тунă. 1945 çулта тăлăх ачасемпе фронтра вилнĕ çынсен çемьисене тата ĕçлеме пултарайман ватă çынсене колхозран 54 центнер ытла тырă, 25 çемьене 20 килограмм çăм панă, 4 çемьене пӳтек, 3 çемьене пăру тулнтарнă. Çакăн пек пулăшнине кура фронтовиксен çемьисем колхоз ĕçне анлăн хутшăнаççĕ. Сăмахран, Анастасия Трофимова, Екатерина Николаева, Евдокия Морозова кăçал 150—200 ĕçкунĕ тунă.

Колхозри пулăшу кассинчен тăлăх ачасене кăçал 8 центнера яхăн тырă, 2 хĕрачана кĕпе-тумтир, 2 ачана костюмпа юбка, 4 ачана çаматă илсе панă. Вĕсем халĕ пурте шкула çӳреççĕ. Шкулта та вĕсене тетрадьсемпе карандашсем тата кĕнекесем панă.

Анчах та Сурăм ял Советĕнче тăлăх ачасемпе фронтра вилнĕ çынсен çемьисене пулăшасси çителĕклĕ вырăнта мар-ха.

Тăлăх ачасемпе фронтра вилнĕ çынсен çемьисене пулăшу парас тĕлĕшпе йышăннă решенисем хăшпĕр тухнă пурнăçа кĕмесĕрех юлаççĕ. Сăмахран: «Заря» колхоз членĕ пулнă Михаил Николаев Отечественнăй аслă вăрçă фронтĕнче вилнĕ, унăн арăмĕ те чирлесе вилсе кайнă. Çапла вара вĕсен тăватă ачи тăлăха тăрса юлнă. Вăл ачасене пăхма колхоз Елена Николаевăна хушнă. Вĕсене колхозран тырă парса тăраççĕ, кĕпе-тумтирсем те илсе панă, анчах та вĕсене лайăх пăхса, вĕрентесе ӳстересси çине тивĕçлипех çаврăнса пăхмаççĕ-ха. Кăçалхи сентябрь уйăхĕнчех вĕсем пурăнакан пӳртĕн ишĕлме пуçланă кăмакине юсасси çинчен колхоз правленийĕ решени йышăннă. Унтанпа чылай вăхăт иртрĕ, хĕл кунĕсем çитсе килчĕç,—анчах йышăннă решени хут çинчех тăрса юлчĕ. Паллах ĕнтĕ, ку ĕçпе колхоз правленийĕ анчах мар, ял Советĕпе партин пуçламăш организацийĕн те интересленмелле.

Ст. АСЛАН.

Совет çĕршывĕ тăрăх

ТИР-СĂРАН ПРОМЫШЛЕННОСĔНЧЕ ĔÇЛЕКЕНСЕН ПĔТĔМ СОЮЗРИ КАНАШЛĂВĔ

Ноябрĕн 22-мĕшĕнче СССР Çăмăл промышленность Халăх Комиссариатĕнче тир-сăран промышленноçĕнче ĕçлекенсен Пĕтĕм Союзри канашлăвĕ уçăлнă. Халăх Комиссарĕн заместителĕ Л. Г. Костенко юлташ хăйĕн умсăмахĕнче çапла каланă: тир-сăран промышленноçĕн граждансем валли атă-пушмак тумашкăн тĕрлĕ йышши тирсем ытларах тума пуçламалла. Канашлăвăн заводсем тăвакан тир-сăрансен пахалăхне тата ассортиментне ӳстермелли мерăсем тупса памалла тата çĕнĕ техникăна пурнăçа кĕртессипе çыхăнса тăракан тĕрлĕ ыйтусене сӳтсе-явмалла.

Тир-сăран промышленноçĕн тĕп управленийĕн главнăй инженерĕ В. А. Волков хăйĕн докладĕнче çапла каланă: 1944—1945 çулсенче Мускаври Тельман ячĕпе тăракан завод, Ленинградри Радищев ячĕпе тăракан завод тата ытти заводсем те рантлă патушасемпе стĕлькăсем тума пуçланă. Кунцевăри, Богородскри, Клинцыри, Калининри тир-сăран завочĕсем лайăх йышши тирсене тума пуçланă. Çавăн йышши тирсене тата тĕрлĕ тĕслĕ тирсене нумайтарах тума пуçламалла. Тир-сăран тăвас ĕçпе унăн пахалăхне контроллесе тăрасси çинчен инженер Д. А. Шейнкман доклад туса панă.

Çав докладсем пирки тухса каланă хыççăн секцисем ĕçлеме пуçласаççĕ.

Канашлу валли уçăлнă выставкăра тир-сăран завочĕсем хăйсем туса кăларакан продукцин тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ.

Ӳкерчĕк çинче: Мускаври Химкири юханшăв вокзалĕ.

А. БОРИСОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

ÇĂРАТНĂ СĔТ ФАБРИКИСЕМ

Куйбышеври заводра çăратнă сĕт тумалли машинăсем туса кăларма пуçланă. Кашни машина пĕчĕк фабрика пек, вăл талăкра 12 пин килограмм çăратнă сĕт хатĕрлеме пултарать. Çăратнă сĕт тăвакан малтанхи икĕ пĕчĕк фабрикăна Куйбышев облаçĕнчи сĕт хуçалăхĕсенче лартаççĕ. Килес çул завод çавăн пек 30 фабрика туса кăларать. (ТАСС)

С. М. КИРОВ МУЗЕЙĔ УÇĂЛАТЬ

Тăватă çул сурă хушши хупăнса тăнă хыççăн Ленинградри Сергей Миронович Киров музейĕ çĕнĕрен уçăлать.

Ленинграда нимĕç захватчикĕсем хупăрласа тăнă вăхăтра музейĕн хаклă япалисене инçетри тыла куçарнăччĕ. Вĕсене лайăх сыхласа усранă. Халĕ вĕсене ĕлĕкхи пекех вырнаçтарса лартаççĕ. Хăшпĕр текстсене çеç çĕнетеççĕ. С. М. Киров фашизма хирĕç каланă сăмахсене, Ленинграда юсаса çĕнетесси çинчен каланă сăмахсене тата ытти сене те ĕлĕкхинчен нумайтарах кăларса хураççĕ.

Тăшман тăтăшах персе тăнипе музей çурчĕ сиенленнĕ. Халĕ строительсем ăна юсаса çитереççĕ. Музей сотрудникĕсем экспонатсене вырнаçтарма пуçланă.

Декабрĕн 1-мĕшĕнче — С. М. Кирова усаллăн вĕлернĕренпе вунпĕр çул тултарнă кун—музее уçаççĕ. (ТАСС).

«ВОКРУГ СВЕТА» ЯТЛĂ ЖУРНАЛА ÇĔНĔРЕН КĂЛАРМА ПУÇЛАССĔ

«Молодая Гвардия» издательство 1946 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа уйăхра пĕрре тухса тăракан «Вокруг света» ятлă журнала тепĕр хут кăларма пуçлать. Çав журналта географи тата геологи ыйтăвĕсемпе çырнă статьясем, пирĕн çĕршыври тата тĕнчери ытти çĕршывсенчи çутçанталăкпа пуянлăхсем çинчен çырнă статьясем, çавăн пекех тата çул çӳренисем çинчен, çĕнĕ çĕрсем тупни çинчен çырнă калавсем пичетленеççĕ. (ТАСС).

ФИНАНС ПЛАННЕ ТУЛТАРМАЛЛИ УЙĂХЛĂХА ХУТШĂНАССĔ

Елчĕкпе Чурачăк районĕсенче финанс активĕн канашлăвĕ пуласа иртнĕ. Канашлура кăçалхи IV-мĕш кварталти финанс планне тултармалли уйăхлăха активлăн хутшăнма тата кварталти финанс планне декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех тултарма йышăннă.

СССР КОНСТИТУЦИЙĔ ÇИНЧЕН КАЛАÇУСЕМ

СОВЕТЛĂ СОЦИАЛИЗМЛĂ ОБЩЕСТВО

Малалли. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммунин» 226-мĕш номерĕнче.

СОЦИАЛИЗМЛĂ ХУÇАЛĂХ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕМ

Пирĕн çĕршывра социализмлă харпăрлăхăн икĕ формин никĕсĕ çинче тĕрлĕрен социализмлă хуçалăх предприятийĕсем туса хунă.

Пирĕн пур заводсемпе фабрикăсене те тата ытти промышленность предприятийĕсене те тенĕ пекех, пур совхозсемпе машинно-тракторлă станцисене те Совет государствин вăйăпе тата укçи-тенкипе тунă. Паллах ĕнтĕ, çак предприятисем пурте тата вĕсем туса кăларакан мĕнпур продукци государствăн харпăрлăхĕ пулса тăрать. Çав предприятисен хуçи Совет государстви пулса тăрать. Совет государствин органĕсем çав предприятисен ĕçне йĕркелесе пыма директорсем уйăрса лартаççĕ. Предприятисенчи рабочисемпе служащисем хăйсен ĕçĕшĕн ĕçукçи илсе пурăнаççĕ.

Пирĕн социализмлă хуçалăх предприятийĕсен государствăлла формисенчен пĕри çакăн пек ĕнтĕ.

Халĕ колхозсене илер. Вĕсене государство пулăшса тата государство ертсе пынипе хресченсен вăйăпе тата укçи-тенкипе тунă. Вĕсене хресченсен ĕç хатĕрĕсемпе ĕç вăйне **ирĕклĕн коллективлă хуçалăха пĕрлештерсе** тунă. Паллах ĕнтĕ, колхозăн мĕнпур хуçалăх пурлăхĕ тата вăл туса кăларакан мĕнпур продукци çав колхоза организациленĕ **хресченсен ушкăнĕн** харпăрлăхĕ пулса тăрать. Колхозăн хуçи хресченсен ушкăнĕ пулса тăрать. Колхоз ĕçне унăн членĕсен пухăвĕ йĕркелесе пырать, пухусем хушшинче вара — колхоз членĕсен пухăвĕ суйласа лартнă правлени тата колхоз председателĕ ертсе пыраççĕ.

Колхозăн государство уменче хăйне уйăрăм обязательствăсем пур. Çав обязательствăсене тултарма колхоз тупăшĕн пĕр пайĕ çеç каять. Ытти пур тупăшсене те колхоза тунă хресченсен ушкăнĕ, ялхуçалăх артелĕн уставĕ тăрăх, **хăйне кирлĕ пек тăнăкласа тата валеçсе** пырать.

Колхозниксем, заводри е совхозри рабочисем пек, государствăран ĕç укçи илсе тăмаççĕ. Колхозниксем хăйсен ĕçĕшĕн **хăйсен коллективлă** хуçалăхĕн тупăшĕнчен илеççĕ. Кунта ĕçшĕн укçан та тата продуктсемпе те ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе параççĕ. **Ĕçкунĕсем тăрăх тупăш валеçнĕ чухне машни колхозник колхозра мĕн чухлĕ ĕç туннине тата çав ĕçĕн пахалăхне шута илеççĕ.**

Колхозниксем коллективлă хуçалăхран илекен тупăмсăр пуçне тата **хăйсен** килĕ çумĕнчи пĕчĕк çĕр участокĕнчен тата хăйсен вылăх-чĕрлĕхĕнчен тупăш илеççĕ. Колхозсемпе колхозниксем хăйсен ытлашши продукчĕсене пасарта сутма пултараççĕ.

Çакăнта каланисем ĕнтĕ пурте пирĕн социализмлă хуçалăх предприятийĕсен колхозсемпе кооперацилле формине сăнласа параççĕ.

Çапла ĕнтĕ, колхозсемпе коопераци предприятийĕсемпе государство предприятийĕсем хушшинче пысăк уйăрăлăхсем пур. Анчах та вĕсем çав предприятисем хушшинче тĕп уйăрăлăхсем пуррине пĕлтермеççĕ-ха. Колхозсемпе кооперацин предприятийĕсен те, государство предприятийĕсен те **тĕп пуçламăшĕсем пĕрпекех. Çав пуçламăшсем äçта-ши?**

Колхозсемпе кооперацин предприятийĕсенче те, государство предприятийĕсенче те ĕç хатĕрĕсем уйăрăм çынсен харпăрлăхĕ мар, **обществăллă харпăрлăх** пулса тăраççĕ. Государство предприятийĕсенче çав ĕçхатĕрĕсем мĕнпур халăхăн, урăхла каласан, пĕтĕм обществăн харпăрлăхĕ пулса тăрать. Колхозсемпе кооперацин предприятийĕсенче вара вĕсем уйăрăм обществăллă организацисен аллинче тăраççĕ. Анчах та государство предприятийĕсенче те, колхозсемпе кооперацин предприятийĕсенче те ĕç хатĕрĕсем пирĕн **обществăллă, социализмлă харпăлăх** пулса тăраççĕ.

Государство предприятийĕсенче те, çавăн пекех тата колхозсемпе кооперацин предприятийĕсенче те работниксем уйăрăм çынсен хуçалăхĕнче мар, обществăллă хуçалăхра пĕрле ĕлеççĕ. Предприяти пĕтĕм халăхăн, урăхла каласан, мĕнпур обществăн харпăрлăхĕ пулса тăрать-и, е уйăрăм обществăллă организацин харпăрлăхĕ пулса тăрать-и,—пурĕ-пĕр вăл пирĕн **обществăллă, социализмлă хуçалăх** пулать. Государство предприятийĕсенче ĕçлекенсене тĕ, колхозпа кооперацин предприятийĕсенче ĕçлекенсене те ĕçшĕн социализмлă пĕр правило тăрăхах тĕлеççĕ. Çав правилăна Сталинла Конституцире çапла çырса хунă: «Кашнинчен хăйĕн пултарулăхне кура, кашнине—унăн ĕçне кура». «Кам ĕçлемест çав çимест».

Государство предприятийĕсем те, колхозсемпе кооперацин предприятийĕсем те **халăх хуçалăхĕн пĕр пĕтĕмĕшлĕ планĕ тăрăх** ĕçсыннисен интересĕсемшĕн, совет обществин, Совет государствин интересĕсемшĕн ĕçлеççĕ.

Çапла ĕнтĕ, пирĕн государствăн тата колхозсемпе кооперацин предприятийĕсем, хăйсен форми тăрăх тĕрлĕрен пулсан та, вĕсен **социализмлă пĕлтерĕшĕ пĕр-пекех** пулать. Государство предприятийĕсенче те, колхозсемпе кооперацин предприятийĕсенче те çынна çын эксплоатацилеме пултараймасть.

Пирĕн социализмлă обществăра эксплоатаци çук, çынна çын пусмăрласа пурăнмасть. Капитализмлă обществăра вара обществăн ытларăхăш пайĕ пулса тăракан ĕççыннисене (рабочисемпе хресченсене) обществăн сахалрахăш пайĕ (капиталистсемпе помещиксем) эксплоатацилесе пурăнаççĕ. Çакă ĕнтĕ пирĕн социализмлă обществăна капитализмлă обществăран уйăрса тăракан **тĕп паллăлăх** пулать.

ПЛАН ТĂРĂХ ТЫТСА ПЫРАКАН СОЦИАЛИЗМЛĂ ХУÇАЛĂХ

Халĕ ĕнтĕ пирĕн хуçалăх предприятийĕсем мĕнле ĕçленине тĕплĕнрех пăхса тухар. Акă, сăмахран, çĕрмамăк акса тăвакан колхозсем çав чĕртавара питĕ нумай пухса илеççĕ. Çĕрмамăкĕ пир-авăр фабрикисене каять, кунта вара унран çĕршер миллион метр пир-авăр тĕртсе кăлараççĕ. Çав пир-авăр малалла кĕпе-туммир çĕлекен фабрикăсене пырса кĕрет. Тĕштырă акса тăвакан колхозсем мĕнпур çĕршыва тăрантармалăх тырпул туса илеççĕ.

Заводсемпе фабрикăсем, ялхуçалăх работникĕсем валли машинăсем, ытти ĕç хатĕрĕсем, горючи, химикле имçамсем, краççын, тăвар, сахăр, пир-авăр, кĕпе-туммир, атă-пушмак, килте тыткаламалли ытти япаласем, кĕнеке-хаçатсем, велосипедсем, радиоаппаратсем тата ытти тĕрлĕ нумай япаласем туса параççĕ.

Кĕскен каласан, пирĕн халăх хуçалăхĕн уйăрăм отраслĕсем, хуçалăхăн уйăрăм предприятийĕсем пĕр-пĕринпе çав тери таччăн пĕтĕççе тăрса, пĕтĕмпе пĕрле вĕсем **халăхăн социализмлă пĕрлĕхлĕ хуçалăхĕ** туса хураççĕ. Кашни уйăрăм предприяти вăл—пĕрлĕхлĕ çав тери пысăк хуçалăхĕн **пĕчĕк пайĕ** çеç пулса тăрать.

Паллах ĕнтĕ, кашни предприятин пĕтĕм çĕршывра кирлĕ ĕçĕн хăйне тивĕçлĕ пайне туса пымалла. Урăхла каласан, кашни предприятин хăйне валли малтанах палăртса хунă **план** тăрăх ĕçлемелле. Çав план ĕнтĕ **пĕтĕм халăх хуçалăхĕн пĕрлĕхлĕ планăн пайĕ** пулса тăрать.

Халăх хуçалăхĕн планне Совет Союзĕн правительстви çумĕнчи **Государствăн план комиссийĕ (Госплан)** туса хатĕрлет.

Пирĕн халăх хуçалăхне аталантарма кашни çул валли тата 5-шер çул валли плансем туса хатĕрлеççĕ. Çав плансенче халăх хуçалăхĕн кашни отраслĕ мĕн чухлĕ тата мĕнле продуктсем туса кăлармалине малтанах палăртса хураççĕ. Çав продуктсене туса кăларма мĕн чухлĕ мĕнле материал кирлине, мĕн чухлĕ тата мĕнле машинăсемпе мĕнле ĕç хатĕрĕсем кирлине, ĕç тухăçлăхне мĕн чухлĕ хăпартма кирлине, таварсен хăйне ларакан хакне мĕн чухлĕ чакармаллине, мĕнле сĕнĕ предприятисем тумаллине, мĕн чухлĕ тата мĕнле ĕçе пĕлекен рабочисемпе специалистсем вĕрентсе хатĕрлемеллине тата ытти çынсене те малтанах палăртса хураççĕ. Çав плансем тăрăх вара кашни уйăрăм предприяти валли уйăрăм плансем туса параççĕ.

Планă илсен, кашни предприяти ăна ытлашшипех тултарма тăрăшать, плана ирттерсе тултарнă тĕслĕхсем пирĕн çав тери нумай.

«Чăн та ĕнтĕ,—тенĕ Сталин юлташ,—производство планĕ вăл миллионшар çынсен чĕрĕ те практикăллă ĕçĕ пулса тăрать... Пирĕн программăн чăнлăхĕ вăл—чĕрĕ çынсем, сирĕнпе пĕрле эпир хамăр, эпир ĕçлеме хатĕр пулни...».

Çапла ĕнтĕ, пирĕн халăх хуçалăхне халăх хуçалăхĕн пĕрлĕхĕн планĕ тăрăх тытса пыраççĕ. Ăна обществăллă харпăрлăха пуянлатас, ĕççыннисен культурăпа материальнăй ырлăхне тăтăшах ӳстерсе пырас, хамăран Тăван çĕршывăн никама пăхăнманлăхне çирĕплетес тата унăн çарти хăватлăхне вăйлаватас тесе, пĕр çĕртен ертсе пынипе тытса пыраççĕ.

Çакă ĕнтĕ пирĕн социализмлă обществăн капитализмлă обществăран уйăрăлса тăракан **тĕп паллăлăхсенчен** пĕри пулса тăрать. Капитализмлă обществăра халăх хуçалăхне план тăрăх тытса пымаççĕ, унта кашни хуçа хăйĕн предприятине, ытларах услам илес тесе, пĕр хăйĕн интересĕсемшĕн çеç тытса пырать.

План тăрăх тытса пыракан социализмлă хуçалăха обществăллă харпăрлăхăн никĕсĕ çинче тунă. Вăл, капитализмлă хуçалăхпа танлаштарсан, темиçе хут усăллăрах. Çакă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче питех те лайăх палăрчĕ. Ун чухне пирĕн хуçалăх, фашистла государствăсен хуçалăхĕпе танлаштарсан, темиçе хут тухăçлăрах ĕçлерĕ. Шăпах çакă ĕнтĕ совет халăхĕпе Хĕрлĕ Çара никам çĕнтерейми аслă вăй парса тăчĕ.

Хамăран социализмлă хуçалăхăн хăватлăхне татах та вăйлăрах çирĕплетсе пырар!

(Юлашки пулать).

Пĕчĕк фельетон

Мăкăрти сунарçăсем

Сунарçăсем тĕрлĕрен пулаççĕ... Франци писателĕ Альфонс Доде сырса хăварнă тăрăх, Кăнтăр Францири Тараскон хули çыннисем тĕлĕнмелле сунарçăсем пулнă. Автора ĕненес пулсан, Тарасконри сунарçăсене вăл çапла сăнласа парать: кашни вырсарникун, ир çинче, Тарасконри сунарçăсем вăрçа кайма хатĕрленнĕ пек хĕпăшалланса, çурăм хыçне ĕçме-çиме кутамкки çакса хире тухса кайни.

Никеке пула-и, е Тарасконри сунарçăсем ытла та йышлă пулнипе-и (эпир ăна пĕлместпĕр), анчах Тараскон таврашĕнче тискер кайăк пачах та нурăнман. Ни хирчăххи, ни пĕтпĕлтĕк, ни тилĕ е сăсар—нимĕн те тĕл пулман. Хула таврашĕнче мĕн пурĕ те пĕртен-пĕр ватă мулкач кăна пурăннă... Анчах вăл пит чее пулнипе, ăна нихăш сунарçă та тытайман.

Мĕн тунă-ха апла Тараскон çыннисем сунара кайсан?

Вĕсем уя тухса пĕр-пĕр йывăç сулхăне ларса каннă хыççăн, йыттисене шăхăрса чĕннĕ те пуçланă... пăшалсемпе пеме. Ушкăнран кашниех шĕлепкине мĕн вăй çитнĕ таран çӳлелле ывăтнă та, сывлăшри шĕлепкене пăшалпа кĕрслеттернĕ.

Кам та кам хăйĕн шĕлепкине пăшалпа персе ытларах шăтарса пĕтернĕ, çав вара чи лайăх сунарçă шутланнă, ăна сунар королĕ тесе хисепленĕ.

Сывлăшри шĕлепкесене тĕл персе шăтарас енчен Тараскона Тартарена çитекенни пулман. Çавăнпа та Тараскон çыннисем ăна хăйсен пуçлăхĕ выранне хурса хисепленĕ...

Мăкăрти (Канаш районĕ) «Правда» колхоз председателĕ И. Григорьевпа ферма заведующийĕ В. Кузьмин юлташсем те Тарасконри сунарçăсенчен юлмаççĕ темелле. Юлмаççĕ çеç-и вара? Çук, вĕсем Тараскон çыннисене чике тăршшех лартса хăвараççĕ.

— Чее сунарçăсем вĕсем, председательпе ферма заведующийĕ,—теççĕ колхозниксем вĕсем çинчен.—Ăс çитет вĕсен хăйсене пурăнма...

Тĕрĕс каласçĕ колхозниксем. Çак икĕ сунарçă (Григорьевпа Кузьмин ĕнтĕ). Тарасконри сунарçăсем пек шĕлепкесене сӳлелле ывăтса пăшалпа персе мар, мулкачсене ял сывăхне сӳреме вĕрентсе чапа тухнă. Вăл ĕç акă мĕнле пулнă.

Çуллахи пĕр ăшă кун, колхозниксем хĕрсе утă çулнă чухне, Григорьевпа Кузьмин хире тухнă.

Сасартăк вĕсен умне мулкач ялт! сикесе тухнă та сывăхри ката еннелле вăркăнтарнă.

— Мулкач, мулкач!—кăшкăрса янă Кузьмин,—ай, пăшалччĕ ку йĕксĕке!..

Куçран сухалса курăнми пуличченех вăл хашкаса мулкач хыççăн чупнă. Чупсан-чупсан такăннă та, çул çине тĕршĕнсе ӳкнĕ. Çавăнта выртнă вăхăтра унăн пуçне тĕлĕнмелле шухăш кĕрсе кайнă. «Чем мулкачсем хыççăн чупса ура тĕпне ватниччен. сăмса тăррине çĕмĕриччен, вĕсене хăйсене ял сывăхне сӳреме вĕрентме, пулмасть-ши? Ава, халăх утă çулать... 3—4 гектар çулмасăр утă хăварсан...

Çак шухăша Кузьмин хăйне хуса çитнĕ Григорьева каласа панă.

— Мĕн шухăшлатăн эсĕ?—ыйтнă вăл Григорьевран ӳксе шăйăрттарнă сăмси тăррине хупласа.

Лешĕ Тартарен пекех савăнса ӳкнĕ:

— Тĕрĕс калатăн, Кузьмин юлташ. 5—6 гектар çулмасăр хăваратпăр та, кĕркунне унта мулкачсем кĕтĕвĕпех пухăнĕç...

Григорьев савăнни Кузьмина тĕппипех савăрса илнĕ: ара председатель-çке! Унăн ӳксе шăйăрттарнă сăмси тăрри те ыратма пăрахнă, юн тымарĕсенче сунарçăн хĕрӳллĕ юнĕ тапма пуçланă.

— Утă мĕнех вăл, тепĕр тесен,—хăюланса çитнĕ Кузьмин председатель хăйне килĕшнине кура. — Вот клеверпа люцерна çулмасăр хăварас пулсан...

— Ма хăварас мар, хăварăпăр мулкачсем валли... Ăна та, кăна та хăварăпăр. Эсĕ калашле пултăр, анчах çын умĕнче ан персе яр, ху патăн ку шухăша. Ну, луç та иккен санăн, Кузьмин юлташ. Каснă лартнă министр пуçĕ... Башка!

Тартарен пекех сăмаха силпе вĕçтерме юратмаççĕ иккен çак туссем. Каланă — тунă. Колхозăн 6 гектар утине, 4 гектар клеверне, 12 гектар люцернине çулмасăр хăварнă. Халĕ çак икĕ «сунарçă» кашни кунах çулмасăр хăварнă утă-клевер-люцерна çине мулкач тытма сунара сӳреççĕ. Каçхине вара туртаççĕ кăна мулкач какайне!

— Тавтапуç ку айвансене,—теççĕ пулĕ шăн клеверпа люцернăна кышлакан мулкачсем.—Григорьевпа Кузьмин пек «сунарçăсем» пулсан, пурăнма пулĕ-ха тĕнчере!..

Тараскон таврашĕнче тискер кайăксем пĕтнĕ пирки Тартарен араслансем тытма Африкăна каять. Африкăра вăл, пĕр тĕттĕм çĕр, араслан тесе пĕчĕк... ашака персе вĕлерет. Çавăнтăн ăна ашак хуçи зонтик аврипе асăнмалăхах ислетсе ярать. Çапла ăс панă Тартарена.

Мăкăрти сунарçăсене — Григорьевпа Кузьмина—мĕнле майпа ăс памалла пулать-ши?

И. САЛАМБЕК.

Нимĕçсен тĕп вăрçă преступникĕсене Нюрнберг хулинче суд туни

НОЯБРĔН 26-МĔШĔНЧИ ИРХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери çар трибуналĕн паянхи ирхи ларăвĕнче Америка енчен айăплакансен представителĕ гитлеровецсен Чехословакие тапăнмалли планне кăтартакан документсем панă, вĕсене гитлеровецсем, ыттисем ан пĕлччĕр тесе, «симĕс план» тесе ят панă. Çав планна çыхăнса тăракан йышлă документсем хушшинче Гитлерпа Кейтель канашланинче çырса хунă хут пур. Вăл документăн ячĕ çапла:

«Берлин, 1938 çулхи апрелĕн 22-мĕшĕ.

«Симĕс план» çинчен тумалли диссертацисен никĕсĕ.

Гитлерпа Кейтель генерал апрелĕн 21-мĕшĕнче пĕр-пĕринпе сӳтсе-явинн итогне кĕскен каласа панă.

Политика енĕпе.

1) Пĕр сăлтавсăрах е тапăннине тӳрре кăларма çук çĕртех—уяр çанталăкра аслати авăтса янă пек кĕтмен çĕртен стратегиллĕ тапăнассине сирсе янă. Çавăн пек тунă пирки пĕтĕм тĕнче пирĕн çинчен тăшманла шухăшланă пулĕччĕ, вара пирĕнщĕн ĕç питĕ начар пулса тăнă пулĕччĕ. Континентри юлашки тăшмана пĕтернĕ чухне кăна çавăн пек тума юрать.

2) Дипломати тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе пĕр вăхăт хушши хирĕçсе пурăннă хыççăн ĕçе тытăнмалла, çавăн пек хирĕçсе пурăнни майĕпен кризис патне илсе пырать, вара вăрçă пуçланса каять.

3) Хирĕçтерекен пĕр-пĕр ĕç тунă хыççăн (сăмахран, нимĕçсене хирĕç демонстраци тунă май Германи посолне вĕлернĕ хыççăн) хăвăрт тапăнмалла.

Вăрçă тĕлĕшпе тунă выводсем.

1) Политика тĕлĕшпе 2-мĕшпе 3-мĕш параграфсенче кăтартнă майсем килсе тухассине шута илсе хатĕрленмелле. Иккĕмĕш май ан килсе тухтăрччĕ, мĕншĕн тесен «симĕсси» (Чехословакие пĕлтерекен сăмах) хăйне хăй сыхлама тытăнĕ.

Питĕ нумай дивизисене чугун çулсемпе куçарса вăхăт ирттерни (çак вăхăта мĕн май килнĕ таранах чакарас пулать) операци вăхăтĕнче çиçĕмле пырса çапма кансĕрлемелле мар.

3) Тăшманăн тĕреклетнĕ линийĕсене нумай çĕрте татса стратеги енчен усăллăрах еннелле кайма пултăр тесе, çийĕнчех пыра-пыра хĕсмелле. Пырса хĕсмелли плансене питĕ тĕплĕн палăртса хумалла (çулсене пĕлни, атакăсен тĕллевĕсене пĕлни, хăйсенĕ панă уйăрăм залачăсене кура колоннăсен составĕсем мĕнле пулмалли), çарпа сывлăш-çар вăйĕсен пĕр вăхăтрах атакăламалла.

Сывлăшри вăйсен уйăрăм колоннăсене пулăшса пымалла (сăмахран каласан, пикировщиксен тăшманăн укрепленийĕсене татса кĕмелли вырăнсенче çĕмĕрсе тăкмалла, резервсене илсе пыма кансĕрлемелле, сигналсене, çыхăнусене çĕмĕрмелле, çапла туса гарнизонсене ытти çарсенчен тата-тата илмелле).

4) Политика енчен илсен, вăрçăн малтанхи тăватă кунĕ ĕçе татса паракан кунсем пуласçĕ. Вăрçă тĕлĕшĕнчен пысăк çитĕнӳ тăваймасассăн, Европăра кризис пулатех. Тытăннă ĕçсене туса çитерни ют çĕршывсене пире хирĕç вăрçа хуттăшаннинчен нимĕн те тухассинне кăтартса памалла, союзниксене схемăна (вăрçăра тытса илнине пайлас ĕçе) хутшăнтармалла тата «симĕссине» шухăш-кăмăл енчен йăлтах йĕркерен кăлармалла.

Çавăнпа: малтанхи хут татса кĕнĕ хыççăн резервсене çаврах илсе моторизацилеме çар (сăмахран, Пильзен урлă, Прага урлă) пĕр шеллемесĕр çав тери вăйлă пырса хĕснипе чакармалла.

5) Май килсен, «хĕрли» (Хĕвеланăçĕнчи фронта пĕлтерекен сăмах) транспортпа куçнине уйăра-уйăра ямалла. «Хĕрли» стратеги тĕлĕшпе хăйĕн вăйĕсене пĕр вăхăтрах пустарса тăратни «хĕрлине» «пирĕншĕн лайăх мар мерăсем» йышăнтарма пултарать. Тепĕр енчен илсен, «хĕрлĕ плана» кирек хăш вăхăтра та пурнăçа кĕртме май пулмалла.

Пропаганда.

1) Чехословакири нимĕçсен мĕн тумаллине кăтартса паракан листовкăсем.

2) Чехсене ытти çĕршывсенчен уйăрса ярассипе хăратакан листовкăсем».

Çак документа Шмундт хăйĕн ячĕпе ашшĕ ячĕн пуçламĕш саспаллисемпе алă пуснă; Шмундт вăл çав вăхăтра Гитлерăн хĕçпăшаллă вăйсем тĕлĕшпе ĕçлекен адъютанчĕ пулнă. Çав тĕп документпа пĕрле запискăсем, малтанлăха сырнă хутсем, телеграммăсем, Чехословакие тапăнма дипломати енчен хатĕрленесси çинчен ют çĕршыв ĕçĕсен министерствине Муссолинипе каласса, ăна гитлеровецсемпе килĕштерсе ĕçлеме ӳкĕтлеме хушса сырнă хут пур.

ОБЕР-ЗАЛЬЦБУРГРА 1939 ÇУЛХИ АВГУСТĂН 22-мĕшĕнче ПУЛНĂ КАНАШЛУ ÇИНЧЕН РЕЙТЕР АГЕНТСТВИ КАЛАНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Нюрнберран пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 23-мĕшĕнче унта секретлă документ пичетлесе кăларнă. Çав документ çакна кăтартса парать: 1939 çулхи августăн 22-мĕшĕнче Гитлер хăйĕн Обер-Зальцбургри (Австрири) генералĕсене çапла калана: сирĕн вăрçă пуçламалла пулать, мĕншĕн тесен Геринг мана—тăватă çуллăх план пăчланса ларчĕ, çитес çулталăк хушшинче Германи çĕнтермесен, вăл «пĕтсе ларать», тесе каларĕ, тенĕ.

Документра çав канашлу мĕнле условисенче пулса иртни çинчен каланă. Вăл документа Америка енчен айăплакансем Нюрнбергри суда параççĕ, вĕсем ăна фашистсен айăпланакан пуçлăхĕсем «агрессиллĕ вăрçăсем пуçлама тăрăшнăшăн» айăплине кăтартса паракан документ тесе шутлаççĕ.

Германи Польшăна тапăниччен 10 кун малтан Гитлер çапла каланă: эпĕ Польшăна «вилепуç» ятлă отрядсем ярастăн, çав отрядсене «поляк расин е поляк чĕлхипе калаçакан мĕнпур арçынсемпе хĕрарăмсене тата ачасене пĕр шеллемесĕр вĕлерсе пыма» хушăп, тенĕ.

«Çапла тусассăн çеç эпир хамăра кирлĕ таран çĕр тупма пултаратпăр»,—тесе хушса хунă Гитлер. «Польшăна пĕтерсе лартăпăр та, унта нимĕçсене куçарăпăр. Унтан... Совет Союзне пĕтерсе тăкăпăр.

ГРЕЦИРИ ПИЧЕТ ГРЕЦИН ÇĔНЕ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ÇИНЧЕН

АФИНЫ, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Грецире тухса тăракан хаçатсем çĕнĕ правительство çине епле пăхас тĕлĕшпе икĕ пая уйăралнă. Республиканецсен хаçачĕсем, ăтам либералсенчен пуçласа коммунистсен хаçачĕсене çити пурте кăмăллă пулнине пĕлтереççĕ. Монархистсен пичечĕ монархистсен «халăх» партийĕ нумаях пулмасть тунă заявлени майлă каласать. Вăл парти правительствăна «конституциллĕ правительство мар, диктаторла правительство» тесе хаклать.

«Элефтери Эллада» ятлă ЭАМ-ăн тĕп органĕ Софулис правительствине «хĕçпăшаллă территористла организацисене пĕтерсе пырас çулпа, çĕршыва тĕпренех демократизацилес çулпа хăюллăн пыма чĕнĕт». Çак çулпа пырсан, ЭАМ правительствăна пур енчен те пулăшса тăма пулать.

ДАМАСКИНОС ХАЙ ВЫРАНТАН ТУХАССИ ÇИНЧЕН ЫЙТНИНЕ КАЯЛЛА ИЛНĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио Афины хулинчен панă пĕлтерӳ тăрăх, Грепи регенчĕ Дамаскинос архиепископ вырăнтан тухасси çинчен панă заявление каялла илнĕ. Хăйĕн çак решенийĕ çинчен вăл Великобританипе США посолĕсене йышăннă хыççăн пĕлтернĕ. Англи посолĕ Липер Дамаскинос архиепископа Англи правительствин сыпăвне панă пулĕ тесе шутлаççĕ. Вăл сырура Дамаскинос хай выранĕнчех юласси çине шанса каланă.

ФРАНЦИ ХАÇАЧĔСЕМ ПĔЛТЕРНИ

ПАРИЖ, ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). «Се смар» хаçат Римран çакăн пек пĕлтернине пичетленĕ: «Çакă паллă пулса тăчĕ: Англипе Америкăн Италири оккупаци власĕсем Англипе Америка инспекторĕсене Италь полицине тата «карабинерсен корпусне» урăхла май йĕркелеме хушнă. Çав инспекторсен Италь полицине урăхла май йĕркелес тата ăна тытса тăрас ĕçе хăйсен аллине илмелле пулать. Вĕсем союзниксен Италири комиссийĕн Англипе Америка органĕсенче ĕçлесе тăраççĕ».

ЮТ ÇĔРШЫВ ХРОНИКИ

* Белград хулинче Румынипе Югослави представителĕсем суту-илӳ договорĕ тăвасси çинчен каласма пуçланă.

* Перепись бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, США-ра 1945 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 140 миллион çын пурăннă.

АНГЛИРИ К ММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН 18-мĕш СЪЕЗЧĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 24-мĕшĕнче Лондонра Англири коммунистсен партийĕн 18-мĕш съезчĕ уçăлнă. Саймор-Холăн пысăк залне 600 делегат пухăннă. Галлерейăсенче хăпасем вырнаçнă. вĕсем хушшинче салтаксем, моряксем тата летчиксем нумай. Съезда ют çĕршывсенчи коммунистсен партийĕсен представителĕсем тата журналистсем те пынă. Англири коммунитсен партийĕн ку съезчĕ вăрçă пĕтнĕ хыççăн пухăннă пĕрремĕш съезд пулса тăрать. Залра икĕ пысăк плакат çакăнса тăрать. Пĕр плакачĕ çине çапла çырнă: «Мирлĕ пурнăçăн кĕрешер—коммунистсен партине тăвар», тепĕр плакачĕ çине—«пичете халăх аллине памалла». тесе çырнă.

Съезда парти председателĕ парламент членĕ Галлахер уçнă. Ăна пĕтĕм зал алă çупса кĕтсе илнĕ. Галлахер çакна асăрхаттарса каланă: пирĕн съезда Франципри коммунистсен партийĕн ветеранĕ Кашен юлташ килчĕ, тенĕ. Делегатсем те, хăнасем те Кашена тата коммунистсен партийĕн ытти представителĕсене хĕрӳллĕн саламланă. Съезд тĕрлĕ комиссисем суйланă тата съездăн кун йĕркипе ĕç регламентне çирĕплетнĕ. Ун хыççăн съезд çарти çынсене киле ярас ĕçе хăвăртлатас тĕлĕшпе черетсĕр резолюпи йышăннă.

Ирхи лару пĕтес умĕн Ирландири коммунистсен партийĕн представителĕ партин генеральнăй секретарĕ Маккенлоу тата Кăнтăр Африка союзĕнчи коммунистсен партийĕн представителĕ Андреус саламлă сăмахсем калана. Андреус хăйĕн сăмахĕнче Англи доминионĕсенчи тата колонийĕсенчи коммунистсен конференцине пухма сĕннĕ. Ирхи ларава хупас умĕн съезд партин центральнăй комитетне суйлама кандидатурăсем тăратас йĕркене çирĕплетнĕ.

ЛОНДОН. ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Англири коммунистсен партийĕн съезчĕн пĕрремĕш ларăвĕнче партин генеральнăй секретарĕ Гарри Поллит тунă политикăллă доклада итленĕ. Гарри Поллитăн пĕтĕм докладне съезд питĕ тимлĕн итленĕ. Гарри Поллит хăйĕн докладĕнче политикăллă лару-тăрăва тĕплĕн çутатса панă, Англин вăрçă хыççăнхи шалти тата тулли политикин ыйтăвĕсене лайăх ăнлантарса панă. рабочисен юхăмĕн пĕрлĕх задачисем çинчен каланă. çавăн пекех тата демократипе социализм ыйтăвне теори енчен ăнлантарса панă. Поллит Англири коммунистсен партийĕ лейбористсен правительствин политики тĕлĕшпе мĕнле политика тытса пынине кăтартса панă.

Поллит докладĕ хыççăн Испанири коммунистсен партийĕн представителĕ Сальвадор Марторель, Польшăри коммунистсен рабочи партийĕн представителĕ Яворская, Сĕнĕ Зеландири, Австралири, Исландири, Финляндири, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи, Австрири, Грепири тата Югославири коммунистсен партийĕсен представителĕсем саламлă сăмахсем тухса калана. Унтан Поллит докладне сӳтсе-явма тытăннă. Вырăнти организацисенчен 12 делегат сăмах тухса калана. Вĕсем пурте Англири коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн политикăллă ĕçне ырлана, парти организацийĕсен хăшпĕр уйăрăм ĕçĕсене критикăлана.

АВСТРИРИ СУЙЛАВĂН МАЛТАНЛĂХА ПАЛĂРТНĂ РЕЗУЛЬТАЧĔ

ВЕНА, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Малтанлăха палăртнă тăрăх, Австрири Нации советне суйланă чухне халăх партийĕ тăратнă кандидатсемшĕн 1.598.474 çын сасăланă (вара çав парти 84 мандат илнĕ), социалистсен партийĕ тăратнă кандидатсемшĕн 1.428.491 çын сасăланă (çав парти вара 76 мандат илнĕ), коммунистсен партийĕ тăратнă кандидатсемшĕн 174.387 çын сасăланă (коммунистсен партийĕ 3 мандат илнĕ). Тата икĕ мандата мĕнле партисем илнине палăртмар-ха.

—⊙—

СУД

СТЕНА ХАÇАТНЕ СĂТĂР ТУНĂШАН

Колхозсенче лайăх тухса тăракан стена хаçачĕ ĕçре пысăк пулăшу пани пуриншĕн те палăрать. Анчах та большевикла критикăна юратман хăшпĕр çынсем вырăнти пичете сăтăр тăваççĕ.

Акă, Ишек ял Советĕнчи Хураçырмари Матрена Халапсина колхозница хăй çинчен çырнă «Çĕнтерӳ» стена хаçатне çурса тăкнă.

Шупашкаркассинчи Димитрий Спиридонов колхозник та çавăн пек киревсĕр ĕç тунă. Вăл пуçламĕш комсомол организацийĕн «Çулăм» ятлă стена хаçачĕн 41-мĕш номерне вăрласа кайнă.

Çакăн пек сăтăрла ĕçсем тунăшăн Халапсинăпа Спиридонова суда панă. Ишлей районĕнчи халăх сучĕ çак ĕçе пăхса тухса, Халапсинăпа Спиридонова 6-шар уйăх ирĕксĕр ĕçлеттермелле тунă.

Ответлă редактор
заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

Завода хуралта ĕçлеме работниксем кирлĕ.

Пĕччен пурăнакан арçынсемпе хĕрарăмсене, 18 çултан пуçласа 55 çула çитнисене илеççĕ.

Ăнăç çынсене укçасăрах тумтир параççĕ, хваттере вырнаçтараççĕ, кунне виçĕ хутчен апат çитереççĕ тата уйăхне 170 тенкĕ укçа тӳлеççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Чапаевский рабочий поселок, Отдел найма и увольнения. Телефоны 6—99 и 0—26.

Завод дирекцийĕ

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство çурчĕн — 0-00

НТ 00464

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. б. 59х42. 1